# АВАЛЛĂХ МАНĂÇМАСТЬ



ШУПАШКАР районĕнче акă ĕнтĕ тăваттăмĕш çул "Апаш вулавĕсем" ирттереççĕ. Хальхинче асăннă мероприятие темиçе çĕрте паллă турĕç.

Малтанах шкул ачисем, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн истори факультечĕн студенчĕсем, хаклă хăнасемпе район администрацийĕн ĕçченĕсем Апаш салине çитиччен лартнă асăну палли патне чарăнчĕç. Ăна "Апаш вулавĕсене" халалланă. "Апаш культурине тĕпчеме питĕ нумай ученăй, тĕпчевçĕ хутшăннă. Халĕ кашни çул тĕрлĕ мероприяти ирттеретпĕр. Пирĕн район ачисем кăна мар, республика, Раççей, тĕнче шайĕнче пĕлчĕр çак культура, авалхи чăвашсен йăли-йĕрки çинчен", – терĕ уява пуçланă май район администрацийĕн социаллă пурнăç пайĕн пуçлăхĕ М.Я.Павлова.

Апаш вулавĕсене халалланă асăну паллинче ашшĕпе амăшĕ, ачи сăнарланнă. Вĕсен хыçĕнче вара – тӳпенелле туртăнакан юпа. "Ку юпа çĕрпе пĕлĕт хушшинчи çыхăнăва пĕлтерет. Авалхи чăвашсем православи тĕнне ĕненмен, вĕсен тĕрлĕ турă пулнă", – терĕ искусствоведени докторĕ А.А.Трофимов. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникне П.С.Пупина, гуманитари институчĕн директорне В.С.Григорьева, унти специалистсене тата ытти хаклă хăнана çăкăр-тăварпа, Апаш сăрипе кĕтсе илчĕç. Пухăннисем пуç тайса, авалхи йăлана лине, Апаш архитектура культурин палăкĕ умне пуçтарăнчĕç. Ĕлĕк-авал кунта 11 тӳпем пулнă, 5-шне кăна тупса палăртнă. Вĕсене 1957 çулта тĕпчеме пуçланă. Шупашкар район администрацийĕ пуçарнипе 2000 çулта тĕрлĕ регионсен хушшинчи "Апашри культурăпа истори пĕрлĕхĕ: пуçламăшĕ, аталану, еткерлĕх" наука практика конференцийĕ иртнĕ, 2003 çулта вара вăл Пĕтĕм тĕнчери пулса тăнă. Унта Финляндирен, Венгрирен, Америкăран, Украи-



аса илсе аслă Турра кĕлĕ турĕç. Унтан асăну палли енне çăмартасем печĕç. "Тĕнче пуçланнă чухне мĕн те пулин çĕмĕрмелле пулнă. Çăмарта вара тĕнче пуçламăшне пĕлтерет. Çăмарта пени – çут çанталăка парне пани", – палăртрĕ А.А.Трофимов.

Унтан пухăннисем Апаш санăран вун-вун ăсчах тĕпчев ирттернĕ. Çак ĕçе пуçарса яраканĕсенчен пĕри – А.А.Трофимов. Йăлана кĕнĕ йĕркепе вут-çулăма пуç тайнипе çыхăннă мероприятисем ирттерчĕç. Кашни çулах Апашсем виçĕ кăвайт хатĕрлесе ун йĕритавра çаврăнса юрлаççĕ, ташлаççĕ. "Çынсем çакна чунтан туни савăнтарать. Пирĕн çакăнпа хавхаланса пурăнмалла", – терĕ гуманитари институчĕн директорĕ В.С.Григорьев. "Улăп тăприсем чăн та хăват параççĕ. Апаш культури аталанни, ăна тĕпчени савăнтарать", – палăртрĕ П.С.Пупин. Уява Шупашкар районĕн Тренккасси шкулĕнче вĕренекенсем те çитнĕ. Наука ĕçĕсем хатĕрленĕскерсем авалхи йăласене сăнаса тăчĕç. "Эпĕ университетра вĕреннĕ чухнех Апаш культурипе наука ĕçĕ хатĕрлеме пуçларăм. Халĕ ăна тăсма ачасем пулăшаççĕ. Апаш тăрăхĕн культурине пĕлме, тĕпчеме питĕ интереслĕ", – терĕ истори вĕрентекенĕ Е.Н.Максимова. Унтан ачасемпе студентсем наука практика конференцине хутшăнчĕç. Истори факультечĕн студенчĕсем Апаш тăрăхĕнчи çынсем мĕн тăхăнса çӳренине, мĕнле тимĕр-тăмăрпа усă курнине, çынсене мĕнлерех пытарнине тĕпченĕ. "Апаш вулавĕсене" кашни çулах интереслĕрех ирттерес тетпĕр. Çакна кура хамăр ял ачисем те истори енĕпе вĕренме каяс шухăшлă", – терĕ Апаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.А.Григорьев.

Мероприяти асăннă районти Колешша ялĕнче тăсăлчĕ. Сарапакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В.Ильин ял историйĕпе паллаштарчĕ. Вырăнти фольклор ушкăнĕсем уява савăнăçлă концертпа вĕçлерĕç. Унтан пухăннисене шӳрпепе сăйларĕç.

■ **Людмила ЯКИМОВА.**

Анатолий ИВАНОВ
сăн ӳкерчĕкĕсем